

# Вăхăт çĕнĕ ятсем ыйтать

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.
Авторĕсем – Светлана Чикмякова тата Оксана Семенова



## Ыр сăмах калама ан ӳркен

КАЛАВ 6+



Олег самолетра куç хупса ларать. Вăл хăйне питĕ телейлĕ туять. Олег вăрăма тăсăлнă уйрăлу хыççăн кĕçех чи хаклă çынна курĕ. Иртнине аса илсен пĕрре вăл савăнчĕ, тепре унăн куççулĕ юхса анчĕ. Кĕрнеклĕ арçын хаклă тумтир тăхăннă. Ун çине юнашар ларакан пассажир тĕлĕнерех пăхрĕ. Олег кăна куççуль тухнин сăлтавне пĕлет.

...Ăна амăшĕ çуралсанах больницăра хăварнă. Ача çураттармалли çуртăн тĕп врачĕ çамрăк хĕрарăма темĕн чухлĕ те ӳкĕтленĕ, анчах та вăл пурпĕр пĕчĕк ывăлне хĕрхенмен, кăкăрне ĕмĕртмен. Тĕрĕссипе, ун çине çаврăнса та пăхман. Олег ача çуртĕнче ӳсрĕ. Вăл пысăк шанăçпа пурăнчĕ, ашшĕпе амăшĕ килессе чăтăмсăррăн кĕтрĕ. Тĕлĕкре те çывăх çыннисене курчĕ. «Ывăлăм, сан пата килтĕмĕр. Атя, киле, пĕчĕкскерĕм», – теççĕ пек вĕсем.

Вăхăт иртрĕ, никам та арçын ача патне килмерĕ. Ытти ачасемпе пĕрле юрă-ташă картине те тăмарĕ, пуринчен те ютшăнчĕ. Воспитательсем ăна пĕрмаях ятлаçатчĕç. Ача усрава илес кăмăллисене те Олега кăтартмарĕç. Ăна каялла тавăрасран шикленчĕç. Арçын ача çапах та сăпайлăччĕ. Никампа та харкашмасть, никампа та çапăçмасть. Вăл шăплăха юрататчĕ. Çутçанталăка пĕрмаях сăнатчĕ. Çумăр çунă чух яланах кантăкран тинкеретчĕ. Хăйне тĕллĕн тата темтепĕр ăсталатчĕ. Шухăша путнă чух воспитательсем каланине те илтместчĕ. Çакăншăн ăна темиçе хутчен те кĕтесе тăратнă. Ача çуртне çĕнĕ тирпейлӳçĕ Мария Васильевна ĕçе вырнаççан унăн пурнăçĕ улшăнчĕ.

Çапла вара Олег каллех кĕтесреччĕ. Хăй те сисмерĕ – куççулĕ унăн чарăнмасăр юхма пуçларĕ. Вăл воспитателе кӳренчĕ, лешĕ каллех ăна ăнланмарĕ. Арçын ача чӳречерен пăхнă чухне вĕçекен кайăксене пĕтĕмпех шутласа тухасшăнччĕ. Ăна вара алăран туртса вăйпах актовăй зала ташлама илсе кайрĕç. «Тăхтăр-ха кăштах», – тенине илтмĕш пулчĕç. Çитменнине, ку хутĕнче те явап тыттарчĕç.

Мария Васильевна нăшиклетсе йĕрекен ача патне пычĕ те аллине ун хулпуççийĕ çине хучĕ. Олег тӳрех ăшăлăха, çепĕçлĕхе туйрĕ, çавăнпа та хускалма та хăрарĕ. Çак асамлă саманта нумай вăхăта тăсас килчĕ унăн.

– Эсĕ мĕн ятлă? – ыйтрĕ сенкер куçлă хĕрарăм кăмăллăн. Кĕсьерен канихвет кăларса арçын ачана пачĕ.

– Ан йĕр, пĕчĕкскер, лăплан, – терĕ вăл каллех çепĕç сасăпа. Вăл ĕç пăрахсан Олегпа чуна уçса калаçрĕ, унăн пурнăçĕ пирки ыйтса пĕлчĕ. Арçын ача хĕпĕртесех йывăççем, кайăксем тата хăйне мĕн кăсăклантарни пирки каласа кăтартрĕ. Мария Васильевна Олега амăшĕ пек те, кукамăшĕ пек те туйăнчĕ. Ватă çын арçын ачана темиçе хутчен те «маттур, маттур» тесе хавхалантарчĕ. Воспитательсене итлеме, вĕсем хушнине пурнăçлама сĕнчĕ.

– Ачам, вĕсем сан телейшĕн тăрăшаççĕ, сана Тăван çĕршыва юрăхлă çын пулса çитĕнтĕр тесе тимлеççĕ, – ăс пачĕ Мария Васильевна.

Тĕлĕнмелле те, Олег ватă çыннăн кашни сăмахне ăша хыврĕ. «Мария Васильевна, каçарăр та, никам та курман чухне сире «анне» теме юрать-и?» – хăюсăр ыйтнăччĕ ача. Ватă çын кăмăллăпах килĕшнине пĕлтерчĕ. Олега ĕçпе кушăрханă аллисемпе ыталарĕ. Арçын ача хăйне пĕрремĕш хут хӳтлĕхре туйрĕ.

... Кунсем, эрнесем, уйăхсем çулсем иртрĕç. Олег Мария Васильевна дежурствăна килессе чăтăмсăррăн кĕтрĕ. «Олег, нихăçан та пуçа ан ус, çирĕппĕн ĕнен, эсĕ ӳссен хăтлăхра пурăнăн. Пуринчен телейли пулăн», – тетчĕ вăл пĕрмаях. Мария Васильевна ыр сăмахсем калама ӳркенместчĕ. Чăн та, ырă сăмах лайăх кун пекех. Этеме вăй-хăват хушать.

Шел пулин те, Олег «амăшĕ» тепĕр тăвата çултан ĕçрен пăрахрĕ, хăй çуралнă тăрăхне ватă тăванне пăхма кайрĕ. Олег малтан хытах кулянчĕ, анчах та Мария Васильевна ăна ăс панине яланах асра тытса хавхаланчĕ. Питĕ тăрăшса вĕренчĕ. «5» паллăсем кăна илме пуçларĕ.

Экзаменсене ăнăçлă тытса института вĕренме кĕчĕ, кайран – аспирантурăна. Халĕ вăл чаплă офтальмолог-хирург. Пысăк ĕç укçи илет. Виçĕ хутлă коттеджра пурăнать. Унăн халь пĕр тĕллев – тăван амăшĕ пекех çывăх Мария Васильевнăна шыраса тупасси.

Çитрĕ кинеми тĕпленнĕ яла. Анчах вăл темиçе çул ĕнтĕ ваттисен çуртĕнче пурăнать тесе пĕлтерчĕç. Олег Иванович чупса мар, вĕçсе хăпарчĕ тейĕн иккĕмĕш хута.

– Анне, эпĕ сан пата килтĕм, – терĕ кĕрнеклĕ арçын.

– Ывăлăм, сана сасран палларăм. Анчах куçăмсем питĕ начар кураççĕ. Ман хамăн ача çук. Эсĕ тăван ывăл вырăнĕнчех, – терĕ ватă çын.

Мария Васильевна Олегăн çемйипе пĕрле коттеджра пурăнма пуçларĕ. Кунта ăна кăмăллăпах йышăнчĕç, телее, мăшăрĕ ырă пулчĕ. Кĕçех ăна Олег больницăна илсе кайрĕ, хăех операци турĕ. «Санра Турă панă пултарулăх пур. Манăн икĕ куçĕ те халĕ лайăх курать», – хĕпĕртерĕ кинеми. Олег Мария Васильевнăна ыталаса илчĕ:

– Аннеçĕм, хăвна тав пуриншĕн те. Санăн ырă сăмахсем мана пурнăçра вăй-хăват пачĕç. Çитĕнӳ тума пулăшрĕç, – терĕ.

Таисия ПЕТРОВА

## Гимн

КАЛАВ 0+

Иван Игнатьевич паян ирех перекет банкне кайма пуçтарăнчĕ. Хĕрĕ çемйипе аякра пурăнать. Кĕçех мăнукĕн çуралнă кун. Кăçал çуллахи вăхăтра вĕсем кукашшĕне килсе кураймарĕç. Ватă çын çакăншăн кулянмасть. Телефонпа кашни кунах калаçаççĕ-çке. Çуралнă кун ячĕпе сюрприз тăвас терĕ Иван Игнатьевич Ленăна, кăштах укçа куçарса парас терĕ.

Çак шухăшсемпе тумланчĕ те вăл. Сумка тем йăтса çӳрес темерĕ, паспорта пиншакăн шалти кĕсйине чикрĕ. Телефон шăлавар кĕсйине вырнаçрĕ.

Банкра яланхиллех çын нумай. Иван Игнатьевич талон илчĕ те пукан çине кайса ларчĕ. Çынсене сăнакаларĕ.

Кăштахран ун телефонĕ янăраса кайрĕ. Хыттăн. Кĕвĕ вырăнне ăна ывăлĕ Раççей гимнне лартса панăччĕ. Банкăн шăп пӳлĕмĕнче вăл мăнаçлăн илтĕнчĕ.

Иван Игнатьевич ларнă çĕртех кĕсйине хыпашларĕ, анчах хыпаланнипе телефонне кăлараймарĕ. Вăл ура çине сиксе тăчĕ. Аллине кĕсйине чикес тенĕччĕ кăна – вăл залри пĕтĕм çын пукансем çинчен тăнине асăрхарĕ. Ахăртнех, кашниех гимна ура çинче итлес терĕ пулĕ.

Маларах кĕсйинчен янăракан кĕвĕшĕн аванмарланчĕ Иван Игнатьевич, анчах телефонне пĕр куплетне юрлама «ирĕк пачĕ», хыççăн сӳнтерчĕ.

Банкран тарăн шухăшпа тухрĕ вăл. Хăшĕсем ăна тав сăмахĕ те каларĕç.

Мĕн тери мăнаçлă, хăватлă иккен Раççей гимнĕ!

Лана БОГОРОДИЦКАЯ

## Мыскараçă

КАЛАВ 12+

Пĕр ирхине магазина тухрăм. Çул çинче хăш лавккана каяссине тесе чарăнса тăтăм.

Çав вăхăтра машина çитсе ларчĕ. Арçынпа хĕрарăм тухрĕç. Хĕрарăмĕ çӳхе кофтăпа, шăлаварпа, çара пуçăн. Кĕлетки-çурăмĕнчен пăхсан, уттине сăнасан ытла çамрăках мар, лутра, мăнтăркка хĕрарăм. Кĕрсе кайрĕ лавккана. Арçынĕ йăрăс кĕлеткеллĕ, çăмăллăн утать, вăтам çулсенчи çын темелле, типтерлĕ тăхăннă. Анчах та кам-ши вăл? Ăнланса илме йывăртарах, мĕншĕн тесен эпĕ ăна палламастăп. Питĕ шухăша яракан тĕлпулу пулчĕ ку маншăн.

Пырса тăчĕ ман ума çак арçын. Сывлăх та сунмарĕ. Тӳрех йĕплĕ сăмахсем калама пуçларĕ: «Эпĕ çĕтĕк-çатăк, ман нимĕн те çук, эп пурăнма пĕлместĕп, эпĕ тăр ухмах», – терĕ те яра пачĕ ташша.

Ку сăмахсем мана пырса тиврĕç ĕнтĕ, мĕншĕн тесен эпĕ начар тăхăннă (çипуçĕ йĕркеллех, анчах çĕнĕ мар), юбкăпа, ун майри пек шăлаварпа мар. Тата мĕн кĕтме пулать-ши ку çынран тесе шухăшлатăп.

Ташшине вара ырă-чаплă артист пекех хитре, питĕ çăмăллăн ташларĕ.

«Спаççип, ташласа савăнтарнăшăн», – терĕм. Ухмах теме те çук ун пирки, ăслă теме те. Ăслă пулсан, вăл çапла каланă пулĕччĕ: «Сывлăх сунатăп, асанне, такама кĕтетĕр-им?» – тейĕччĕ. Йĕплĕ сăмахсемпе çын чунне ыраттарман пулĕччĕ. Ухмах теме те çук. Апла пулсан кам-ха вăл?

Мĕнле шухăш пулчĕ-ши ун пуçĕнче? Кӳрентерес-хурлантарас е ташласа савăнтарас терĕ-ши? Тен, вĕçкĕн Ваççа пек вĕçкĕнленес килчĕ-ши ман умра?

Ăс-тăнпа лайăх шухăшласа пăхсан, хăрамалла пек Турă саккунне пăсма. Турă çынна кӳрентерме хушман.

Мĕнле калас, çынсене çăпата шакканă пек пĕр калăппа калăплама çук, анчах та Турă судĕнче пурин те пĕр пек явап тытма лекет. Никама та Турăн хĕрĕх судне машинăпа кĕртмеççĕ-çке. Çавăн çинчен шухăшласа çынлăха çухатмасан лайăх пулмалла пек туйăнать.

«Чипер юл, асанне, сывлăхлă пурăн», – тесе калама та ăс çитереймерĕ вĕт-ха.

Эпĕ ăна кӳренмерĕм. Сахал мар курнă ун пек каппайчăксене хам ĕмĕрте. «Живи, радуйся, продолжай в таком же духе», – терĕм. «Чипер кайăр, телейлĕ çулпа çӳрĕр», – тесе алă сулсах ăсатрăм.

Кӳрентертĕм пулсан, каçару ыйтатăп. Çамрăксем мода хыççăн хăвалаççĕ, ватă çынсем вара мода хыççăн кайса шăлавар тăхăнса намăс курасшăн мар...

Зоя БАРАНОВА

ÇĔНĔ САВĂСЕМ

Лиана ГРИГОРЬЕВА

## Ыррине йăлтах сире сунатăп...

Ыррине йăлтах сире сунатăп,
Ирхине тухсассăн сар хĕвел.
Шăплăха сире валли ыйтатăп,
Паянхишĕн пултăр вăл тĕллев.

Вăркăш çил те ăшă çумăр çутăр,
Çĕр питне вăл патăр сывлама.
Кашни çын хăйне телейлĕ туйтăр,
Канлĕ ыйхă туптăр лăпланма.

Тӳпере пин çăлтăр вăй вылятăр,
Уйăх та çӳретĕр ярăнса.
Çутă шанăç, ĕмĕт те çуралтăр,
Ыранхи куна, ырра шанса...

Ирех çырма лартăм, вăхăт çитмерĕ,
Çырас кăмăлпах çӳреп айланса.
Кăнтăрла иртсе кайрĕ, вăхăт кĕтмерĕ,
Ларас теп çырма кăштах лăпланса.

Ĕç тумĕ, çи-пуçĕ çынна илем кӳрĕ,
Чуна шанăç парĕ малашлăх çинчен.
Пĕр ялăн пĕр урамĕ, шанăçлă кӳршĕ,
Пĕр пĕчĕк кĕтесĕ çак пысăк тĕнчен.

***

Ирхи сар хĕвелĕн пин-пин
пайăркийĕ
Çĕре çупăрларĕ, лăпкарĕ пулсан,
Хĕвелтухăç енчи сĕвек тăвайккийĕ
Çĕр çырли ӳснĕрĕн ытла та пуян.

Чăваш çĕрĕ-шывĕ, вăрманĕ ешерĕ,
Мĕн чул кайăк-кĕшĕк шăратĕ юрра!
Этем пурнăçне, шăпине те тишкерĕ
Кашни утасра асăнса вăл Турра...

***

Ак, паян эп каллех çӳретĕп уйра,
Алра манăн туя, хыçра кутамкка.
Ирех пуçăм шавлать,
пулнă евĕр туйра,
Лартнă тейĕн ĕнсе çинелле кунтăка.

Тӳпере пĕлĕт çук, вăркăш çилĕ вĕрет,
Ват йăмра кашлани,
сас пани илтĕнет.
Тирек алă çупса çĕнĕ кĕвĕ калать.
Сар хĕвел пайăрки ăшăтса çупăрлать.

Çутçанталăк çапла
ыйхăран вăранать.
Кайăк-кĕшĕк сасси ĕшнерен илтĕнет.
Ирхине шуçăмпа ĕçчен халăх тăрать,
Ялсенче килĕрен кулленхи ĕç вĕрет.

Паян ĕнерхи мар, сар хĕвелĕ çукран,
Талккишпех тӳпере тачка пĕлĕт хуçан
Çиле май шунăран,
хумлăн-хумлăн кăтран,
Вĕçĕ çук евĕрлех карса хунăн çатан,
Виçĕ кун касура – шухăшсем те таса.

***

Çĕрулми кăлартăмăр ĕнер,
Йышĕ пур, анчах та вĕтĕрех.
Сахал çумăр çурĕ çăвĕпех,
Çитĕнме те пулчĕ тертлĕрех.
Сар хĕвелĕ хытă хĕртнĕрен,
Çĕр питне çунтарчĕ вĕрипе.
Симĕс курăк шывсăр типнĕрен,
Çĕрулми те ӳсрĕ-çке хĕнпе.
Тырă-пулă çав-çавах аван,
Уй-хирте пиçет те хумханса,
Сăнаса пăхсассăн савăнан.
Талккишпех выртать вăл сарăлса.
Ылтăн тĕслĕ тырă пуссинче
Уй карапĕ ярăнса çӳрет.
Вăркăш çилĕ вĕрнĕ майĕпе
Тулă пучаххи пуçне пĕкет.

***

Ырă ир, тесе çыратăп,
Пултăр ырă чăн-чăнах.
Шанăçпа куçа уçатăп.
Вăранатăп-ха сывах.

Ĕнер каç сив çумăр çурĕ,
Вăйлă çилĕ ахăрса,
Алхасса кăшт сăтăр турĕ,
Ир çухалнă тăпланса.

Хура пĕлĕчĕ тăрсан та,
Шикленмешкĕн кирлĕ мар.
Кĕрхи кун хура пулсан та,
Çутçанталăк чирлĕ мар.

Еккипе ак çăвĕ юрĕ,
Кĕçех пулĕ çуна çулĕ.
Йĕркине пĕлет-çке Турă,
Кăмăлпа кăштах йăл кул!

**Вăхăт çĕнĕ ятсем ыйтать**

Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕн, информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин пулăшăвĕпе пичетленет.

# Пĕрремĕш юр ӳксен

*КАЛАВ* 6+

Аня ашшĕпе амăшĕпе пĕрле аттракционсен паркне килнĕ. Мĕн тĕрлĕ карусель çинче ярăнмарĕç пуль вĕсем. Хыççăн тутлă мороженăй çисе киленчĕç. Улттăри хĕрпĕрчи çав тери хаваслă та савăнăçлă. Ашшĕпе амăшне аллисенчен тытса сиккелесе пырать. Киле кайма автобус чарăнăвне утрĕç вĕсем. Унта çитсен амăшĕ хĕрĕ патне чĕркуçленчĕ те:

– Эпĕ халĕ сирĕнпе пĕрле пыраймастăп. Ман урăх çĕре васкамалла. Каярахпа, пĕрремĕш юр ӳксен, тĕл пулăпăр, – тесе килсе чарăннă троллейбуса кĕрсе ларчĕ, чӳречерен ал сулса хĕрĕпе сывпуллашрĕ.

– Анне, тархасшăн, тăхта. Мана та хăвăнпа пĕрле илсе кай. Эпĕ сана питĕ-питĕ юрататăп! – ĕсĕклесе чупрĕ амăшĕ хыççăн Аня.

– Лăплан, лăплан, пĕчĕкскерĕм. Ку хăрушă тĕлĕк çеç, – асламăшĕ пусĕнчен ачашланипе куçне уçрĕ хĕрача.

– Асанне, эпĕ аннене куртăм. Вăл пĕрремĕш юр ӳксен килетĕп терĕ, – тĕлĕкне каласа кăтартрĕ Аня. Асламăшĕ мăнукне итленĕ май пуçне пĕксе йĕпеннĕ куçĕсене шăла-шăла илчĕ.

– Атя, тăрса тăхăн. Ирхи апат вăхăчĕ çитрĕ. Эпĕ сан валли эсĕ килĕштерекен икерчĕ пĕçертĕм. Холодильникре çĕр çырли варенийĕ пур, – текелесе тĕпеле иртрĕ ватă çын. Юлашки вăхăтра амăшĕ пирки калаççанах пурте сăмаха урăх енне пăрма тăрăшнине сисрĕ хĕрпĕрчи. Акă халĕ те асламăшĕпе аслашшĕ тем пирки пăшăлтатрĕç, ассăн-ассăн сывларĕç.

Кăнтăрла иртсен пӳрт умне палланă машина çитсе чарăнчĕ. Темиçе кун ашшĕне курман хĕрача килкартине чупса тухрĕ, арççынна мăйĕнчен ыталаса илчĕ:

– Аннене халĕ те пульницăран кăлармарĕç-и? Тен, мана ун патне кĕме ирĕк парĕç. Ыйтса пăх-ха, атте, тархасшăн. Эпĕ аннешĕн питĕ хытă тунсăхларăм, – йăлăнчĕ Аня.

Ашшĕ ним калама та аптрарĕ. Мĕнле тĕрĕс сăмах тупса ăнлантармалла ĕнтĕ пĕчĕк хĕрне амăшĕ йывăр чире пула ĕмĕрлĕхех куçне хупнине. Тек вăл нихăçан та Аньăна ирпе çамкинчен чуптуса вăратмĕ, ыталаса илсе хăйĕн тавра çавăрмĕ. Пурте пĕрле сĕтел тавра пухăнса, шăкăл-шăкăл калаçса, шӳтлесе апатланмĕç тек. Пысăк хуйхă тăрук телейлĕ çемьене пырса аркатрĕ. Вăтăртан тин çеç каçнă хĕрарăм çур çул хушшинче хăрушă амака пула çунса сӳнчĕ. Çак вăхăтра мăшăрĕ те пĕр самантрах ватăлса ларчĕ, пуçĕ кĕмĕл çӳçсемпе шуралчĕ. Анчах темĕнле йывăр пулсан та чăтмалла, пĕчĕк хĕрне ура çине тăратмалла унăн.

– Анечка, çук ĕнтĕ аннӳ пирĕнпе пĕрле. Вăл халĕ çӳл тӳпере. Сана унтан сăнаса-упраса тăрĕ,– аран-аран пăшăлтатрĕç арçын тутисем.

– Анне мана урăх юратмасть-и? Эпĕ ним япăххи те тумарăм-çке! Мĕншĕн вăл мана пăрахса кайрĕ-ĕ-ĕ?– чылайччен лăпланаймасăр макăрчĕ Аня.

– Аннӳ сана питĕ-питĕ юрататать. Анчах халĕ пирĕнпе пĕрле ниепле те пулаймасть. Эпир малашне иксĕмĕр пурăнăпăр, – чĕркуççи çинче ларакан хĕрне ăшшăн ыталарĕ ашшĕ.

Ватăсем тем пек ӳкĕтлесен те тепĕр кунне ывăлĕпе мăнукĕ ирех çула пуçтарăнчĕç:

– Аньăна киле илсе каятăп. Манăн ĕçе тухмалла, унăн ача садне çӳремелле.Çитес çул шкула кайма хатĕрленмелле, сиктерни аван мар.

Хваттер алăкне уçсан Аня яланхиллех амăшне курасса, ăна ыталаса питĕнчен чуптăвасса тем пек кĕтрĕ. Анчах шанни кăлăхах пулчĕ. Малтан савăнăçпа тулнă килĕ халь сивĕ те ют пек туйăнчĕ хĕрачашăн. Чӳрече çинчи амăшĕн юратнă чечекĕсем те шанса типнĕ. Чунĕ кӳтсе килнипе ĕсĕклесе йĕчĕ вăл.



Вăхăт пĕр чарăнмасăр малалла шурĕ. Кашни кун пĕр йĕркепе иртрĕ. Ирхине ашшĕ Аньăна машинăпа ача садне леçрĕ, унтан ĕçе васкарĕ. Каçпа пĕрле киле таврăнчĕç вĕсем. Канмалли кунсене ялта аслашшĕпе асламăшĕ патĕнче ирттерчĕç. Çу кунĕсем çиçĕмле хăвăртлăхпа вĕçсе иртрĕç. Кĕрхи çанталăк та пăсăлчĕ, кунсерен çумăр лӳшкерĕ.

Пĕр ирхине вăрансан Аня тавралăх шуръюрпа витĕннине курчĕ. Çийĕнчех çулла курнă тĕлĕкне аса илчĕ. Мĕнле чăтăмсăррăн кĕтрĕ вăл çак саманта. Чĕри теме сиссе кăл-кăлт тапрĕ. Çак кун ашшĕн кивелнĕ машини тапранмарĕ.

–Эх-х, тахçанах юсама памаллаччĕ. Халь тĕппипех çĕмĕрĕлсе кайрĕ ĕнтĕ. Часрах автобус çине чупмалла, – хĕрне аллинчен туртрĕ ашшĕ. Вĕсем кирлĕ автобуса ларма ĕлкĕрчĕçех. Салона кĕрсе вырнаççан Аня хăй умĕнче ларакан çамрăх хĕрарăма сăнарĕ. Шухăша путнăскер вăл чӳречерен пăхса пыратчĕ. Темшĕн питĕ çывăх та тахçанах пĕлекен çын пек туйăнчĕ вăл хĕрачана. Ара, çак хĕрарăм унăн амăшĕпе пĕр пек-çке! Чăнах та, хура куçлă, шĕвĕр сăмсаллă, тутăрĕ айĕнчен çырă çӳç пĕрчисем курăнаççĕ. Тулли кĕлетки çеç урăхларах унăн. Хăйне тимлĕ сăнакан хĕрачана курсан вăл ăшшăн кулса илчĕ. Çак вăхăтра транспорт чарăнчĕ те ашшĕ Аньăна тухма васкатрĕ.

Тепĕр кунне те вĕсем çак автобус тĕлнех тухрĕç. Хĕрача тӳрех ĕнерхи хĕрарăма куçĕпе шырарĕ. Салонра халăх нумай. Пушă вырăнсем çук. Акă Аня кĕтнĕ çыннипе куçĕсемпе тĕл пулчĕ. Çийĕнчех ашшĕне хура пальто тăхăннă хĕрарăм еннелле туртрĕ. Ун патне çитсенех сăмах хушма васкарĕ:

– Мана Аня тесе чĕнеççĕ, ку ман атте Олег Петрович, – чĕвĕлтетрĕ вăл.

– Эпĕ вара Ирина, сирĕнпе паллашма питĕ кăмăллă, – хуравларĕ çамрăк хĕрарăм.

– Эсир качча кайнă-и?– хăйне канăçсăрлантаракан ыйтăва тӳрех лаплаттарчĕ хĕрача.

– Аня, ун пек юрамасть, каçару ыйтатăп сирĕнтен, Ирина, – аванмарланса хĕрелсе кайрĕ ашшĕ.

– Упăшка çук, эпĕ пĕчченех пурăнатăп. Ой, суятăп, йытă пирки маннă, эпир иккĕн пурăнатпăр, – лайăх кăмăлне пытармарĕ çĕнĕ пĕлĕшĕ.

– Эпир те аттепе иккĕн çеç пурăнатпăр. Эпĕ йытăсене питĕ юрататăп. Сирĕнпе канмалли кунсенче тĕл пулсан аванччĕ, – ашшĕне тилмĕрсе пăхрĕ хĕрĕ.

– Ну, мĕнех, эп хирĕç мар. Акă ман телефон номерĕ, шăнкăравласса кĕтетĕп, – терĕ çамрăк хĕрарăм йăл кулса.

Çак каç тинех лăпкă та канлĕ ыйха путрĕ Аня. Акă, вăл, ашшĕ, Ирина тата ун çăмламас тусĕ хулари паркра. Хĕрача йытăпа ăмăртмалла вылять, вĕсен хаваслă сасси таçта çитиех сарăлать. Хыçалта пысăк хитре чечек çыххи йăтнă Иринăна аллинчен тытнă савăнăçлă ашшĕ утать.

**Елена МИХАЙЛОВА**